# «Пурнăçра çăмăл вырăн шыраман»

***Историре, пурнăçра кашниех хăйĕн йĕрне хăварать ĕнтĕ. Камăн вăл сулмаклăрах, ӳсĕмлĕрех, камăн ун пекех те мар пулĕ. Апла пулин те района ертсе пынă çынсен аса илмелли те, хăйсем тăрăшнипе туса ирттернĕ ĕçсене хак памалли те çук мар ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен Муркаш районĕ нихăçан та кайрисен, япăххисен ретĕнче пулман. Кунта вара районта тăрăшакан кашни çынпа пĕрлех ертӳçĕсен тӳпи те пĕчĕк мар.***

***Çак кунсенче «Росгосстрах» компанин Муркашри страхлакан пайĕн ертӳçипе Валерий Иванович ВЯЗОВПА тĕл пулма тӳр килчĕ. Вăл района 1996–2004 çулсенче ертсе пынă. Хăй ĕçленĕ çулсем пирки сăмах пуçартăм унпа.***

– Манăн ĕçлĕ пурнăç шкулта вĕреннĕ чухнех пуçланнă. Атте эпĕ çулталăк тултарсанах, 1952 çулта çĕре кĕнĕ, анне вара тăхăр ачапа юлнă. Пурин те ĕçлесе çитĕнмелле пулнă. Студент чухне те вĕреннипе пĕрлех ĕçрен юлман.

Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухсан Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра тĕп агроном пулса ĕçлеме пуçларăм. Вăл вăхăтра ку хуçалăх «Красный Октябрь» (Хорнуй) хуçалăхпа пĕрлешрĕ. Хуçалăх ертӳçи пулма А.Г. Игнатьева суйларĕç. Унпа ĕçлеме аванччĕ. Анлă тавра курăмлă председатель çамрăксене шанатчĕ.

1978 çулта мана ВЛКСМ Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйларĕç. Ку ĕçе мана шанса пани эпĕ институтра комсомол организацийĕн секретарĕ пулса ĕçленипе çыхăннă тесе шутлатăп. Комсомолта ĕçленĕ вăхăтра сахал мар çĕнĕлĕхсем ĕçе кĕртме май килчĕ. Предприятисемпе организацисенче çамрăксен бригадисене нумай йĕркелерĕмĕр, тĕрлĕрен конкурссемпе ăмăртусем ирттертĕмĕр. Комсомол ретĕнче тăракансем 4,5 пин çынччĕ.

1981 çулта КПСС райкомĕн секретарьне суйларĕç. Кунта промышленность, строительство, сывлăха сыхлас ĕç, сутуилӳ тата йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессин отраслĕсене йĕркелесе пынă.

1983 çулта «За коммунизм» колхоза ертсе пыма пуçларăм. Ун чухне хальхи «Оринино» тата «Восток» хуçалăхсем пĕр колхоз пулнă. Хуçалăхра ларутăру питĕ йывăрччĕ. Парăмсем кăна 5 миллион тенкĕ пулнă. Çавăнпах пулĕ манăн ĕç кĕнеки çине çакăн пек йĕркесем кĕрсе юлчĕç: «Освободить от занимаемой должности в связи с направлением для укрепления экономически слабого хозяйства в свете решений майского (1982 г.) Пленума ЦК КПСС и избранием председателем колхоза «За коммунизм». Çавна май хама тивĕçлипех хальхи 25 пинлисен шутĕнче пулнă тесе шутлатăп.







Хуçалăх экономикине çĕклесси çăмăл ĕç мар. Апла пулин те çынсемпе тачă çыхăнса ĕçленипе тата ял хуçалăх специалисчĕ пулнă май хуçалăх экономикине самай çĕклеме май килчĕ.

1986 çулта КПСС Чăваш Обкомне ĕçлеме куçарчĕç. Унта ял хуçалăх пайĕн ертӳçин çумĕ пулса ĕçлеме тытăнтăм. Ял хуçалăх экономикин тата кадрсен ыйтăвĕсене йĕркелесе пынă. Ку ĕç мана республикăна пĕлме, тавракурăма анлăлатма чылай пулăшрĕ.

1988 çулхи апрель уйăхĕнче КПСС Пăрачкав райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулма суйларĕç. «Çăмăл» район теместĕп. Районта ытларах вырăссемпе мăкшăсем пурăнаççĕ. Апла пулин те пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме май килчĕ. Виçĕ çул хушшинче нумай çулсем, шкулсем, Культура çурчĕсем, фермăсем туса хута ятăмăр. Çавсене шута илсех пулĕ Пăрачкавсем 1989 çулта мана Чăваш АССР-ĕн Аслă Канашĕн депутачĕ пулма суйларĕç.

1990 çулта Муркаша таврăнмалла пулса тухрĕ. Октябрь уйăхĕнче тепĕр хут «За коммунизм» хуçалăха ертсе пыма тытăнтăм. 10 çула яхăн «За коммунизм», кайран «Оринино» хуçалăхсене ертсе пынă, ĕç дисциплинине çирĕплетессипе, тыр-пул тухăçне ӳстерессипе çине тăнă. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çине пысăк тимлĕх уйăраттăмăр.

1996 çулта халăх район пуçлăхне суйларĕ. 2004 çулччен ĕçлерĕм ку ĕçре. Ку вăхăтра туса ирттернĕ ĕçсенчен чи малтанах районти ялсене газ кĕртесси пĕрремĕш вырăнта пулчĕ. 1996 çулччен газ пăрăхĕсене районта 295 километр хурса хăварнă пулсан, 2004 çул тĕлне вĕсен вăрăмăшĕ 751 километра çитрĕ.

Газификаци енĕпе çине тăрса ĕçлеме тытăннă май социаллă объектсене газпа хутса ăшăтма тытăнтăмăр. Çулсем, ялсенче шыв пăрăхĕсем хурасси те Чăваш Республикин Правительствин программисемпе килĕшӳллĕн пулса пычĕ.

Районта уйрăм программăпа шкулсен çурчĕсене тăвасси анлăн сарăлчĕ. Вĕрентӳпе культура центрĕсене çĕклеме тытăнтăмăр. Кун пек центрсем Турайра, Атапайра, Вăрманкассинче (Йӳçкасси ял тăрăхĕ), Юнкăра, Сосновкăра, район центрĕнче лицей, Очăкассинче шкул хута кайрĕç. Пĕр мухтанмасăрах калама пултаратăп: пирĕн опытпа паллашма ун чухне Раççейри ытти регионсенчен, ют çĕр-шывсенчен те делегацисем сахал мар килсе кайрĕç.

Паллах, çак ĕçсене ниепле те пĕччен тума май килмен. Палăртнă пулăттăм: питĕ çирĕп команда йĕркеленчĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен тата ытти предприятисен ертӳçисемпе, ял администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе тачă çыхăнса ĕçленĕ. Район пуçлăхĕ çумĕнчи коллеги членĕсене, старейшинăсен канашĕн членĕсене, ветерансен, хĕрарăмсен канашĕсен членĕсене пысăк тав сăмахĕ каланă пулăттăм.

Кашни çулах районти ял хуçалăх предприятийĕсем пысăк наградăсене тивĕçнĕ. Муркашсем республикăра 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш вырăнсенче пулнă. Малта пыракан хуçалăхсене çĕнĕ ял хуçалăх техники парса та чысланă. Хуçалăхсен ертӳçисемпе ял ĕçченĕсене те хавхалантарнă. Вĕрентӳ ĕçĕ çине те пысăк тимлĕх уйăрнă.

Район центрне тирпей-илем кĕртессипе чылай тимленĕ. Кивĕ парка çĕнĕрен йывăççем лартса, беседкăсем туса илемлетрĕмĕр, ачасем валли ятарласа парк уçрăмăр. Урамсенче çĕнĕрен асфальт сарнă, бордюрсене сăрласа шуратма пуçларăмăр.

2001 çулта Муркаш салине ЧР Правительствин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн республика ăмăртăвĕнче 1-мĕш вырăн пачĕç. Ытти ялсене те тирпейилем кĕртессипе ятарласа йышăну кăларнă. Вĕсен итогĕсене пĕтĕмлетсе малти вырăнсене тивĕçнисене палăртнă. Кунпа пĕрлех дипломсем, укçан парнесем парса та хавхалантарнă.

Культурăпа спорт япăх мар аталанса пычĕç. Олимп чемпионки В.М. Егорова ячĕпе ирттерекен ăмăрту вăй илчĕ. Çĕнĕ чемпионсем çуралчĕç: В. Соколова, П. Трофимов, Т. Моисеева т. ыт. те. Район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн пысăк ăмăртусем ирттерме тытăнтăмăр. С. Черкашин пуçарулăхĕпе районта бокс аван аталанса кайрĕ.

Çĕнĕрен «халăх коллективĕ» ята илнĕ ушкăнсем çуралчĕç. Çак коллективсене хавхалантарас енĕпе çĕнĕрен костюмсем çĕлесе панă. Район энциклопедине пичетлесе кăларма пултарни те пысăк ӳсĕм пулчĕ.

Сывлăха сыхлас ĕç те аталанса пычĕ. Больницăсенче юсав ĕçĕсем чылай туса ирттернĕ, çĕнĕ оборудовани туяннă. Уйрăмах Нискассинче тата Ярапайкассинче пĕтĕмĕшле практика врачĕсен офисĕсем уçăлни пысăк пĕлтерĕшлĕ самант пулчĕ. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма ăçтан кăна делегацисем пулмарĕç пулĕ.

Тепĕр пĕлтерĕшлĕ саманта та асăнса хăварнă пулăттăм. Шупашкар хулипе ятарлă килĕшӳ туса çыхăнса ĕçлесе пыни те пирĕн районшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕ. Хула пуçлăхĕ А.А. Игумнов, унăн пĕрремĕш çумĕ Н.Ю. Партасова хулапа район çыхăнăвĕсене анлăлатма нумай пулăшрĕç. Хула пасарĕсенче сутă тума район çыннисене лайăх условисем туса пачĕç. Хулара пысăк ярмăрккăсем иртрĕç. Ял ĕçченĕсем кашни çулах хулари тĕрлĕ предприятисенче пулса вĕсен ĕçĕпе паллашма пултарчĕç.

Района хулара «Пельмени» кафе уçма ирĕк пачĕç. Ку кафене пирĕн ентеш, А.Г. Николаев космонавт пельмень çиме çӳреме юрататчĕ.

Аслă вĕрентӳ учрежденийĕсемпе çирĕп çыхăну тытнă. Чăваш патшалăх университечĕпе килĕшӳ туса Муркашра лицей уçрăмăр. Кăçал лицей уçни 10 çул тултарать.

Пушкăрт Республикинчи Шаран районĕпе çирĕп çыхăну йĕркеленĕ. Тĕрлĕрен делегацисем пĕр-пĕрин патне пырса çӳренĕ. Уйрăмах культура ĕçченĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарнă. Шаран районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсем пирĕн районта ăратлă ĕнесем, сыснасем сахал мар туяннă.

Калас пулать, Муркаш районĕ эпĕ ĕçлеме пуçличченех республикăра малтисен шутĕнче пулнă. Районшăн хастар ĕçленĕшĕн эпĕ пĕрле ĕçлеме пуçланă чухнехи çынсене В.Ф. Григорьева, В.С. Краснова, В.М. Рубцова тата ыттисене пысăк тав сăмахĕ калатăп. Мана ĕçлеме вĕсен пуян опычĕ те чылай пулăшрĕ. Темĕнле йывăрлăхра та пулма тӳр килчĕ. 1996 çулта, района ертсе пыма пуçăннă вăхăтра, пенсионерсем 4–5 уйăх пенси илейменни те пулнă, бюджет сферинче ĕçлекенсем çуршар çул та ĕç укçи илеймен. Ача пособийĕсем вырăнне те тĕрлĕрен таварсем панă. Строительство ĕçĕсене тунăшăн та вексельсемпе тӳленĕ. Çак йывăрлăхсене те чăтса ирттерме май килчĕ.

Туса çитереймен ĕçсем те пулчĕç пулĕ. Май килнипе усă курса район çыннисене пĕрпĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пынишĕн чун-чĕререн тав сăмахĕ калатăп.

Паян районта лайăх улшăнусем пурри чуна савăнтарать. ЧР Президенчĕн программине пурнăçласа иртнĕ çул республикăри кашни ял патне асфальт сарнă çулсем туса çитерни те мĕне тăрать. Ĕç укçи ӳсет, пенси хăпарать.

Тĕнчери экономикăпа финанс кризисĕ районшăн та йывăрлăхсем кăларса тăрататех ĕнтĕ. Çапах та район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн командипе çак йывăрлăхсенчен тивĕçлипе тухасса шанас килет. Муркаш ен хăйĕн ят-сумне нихăçан та çухатман, çухатмĕ те.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Шомик ялĕнче сут çанталăк газне чĕртнĕ чухнехи самант: çак уявра Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров, «Газпром» президенчĕ Р. Вяхерев, район администрацийĕн пуçлăхĕ В. Вязов, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ В. Краснов; 2002 çулта Пушкăрт Республикинчи Шаран районне йĕркеленĕренпе 250 çул çитнине халалланă уявра. Уяв саламне В. Вязовран Пушкăрт Республикин Президенчĕ М. Рахимов йышăнать.**

# Ĕçченнисем Ленин орденне тивĕçрĕç

1930-мĕш çулсем пирки сăмах пуçарас килет. Ку вăл – коллективизаци вăхăчĕ. Кашни ялта тенĕ пекех уйрăм çынсен хуçалăхĕсенчен колхозсем йĕркелеме тытăннă. Пĕччен-шерĕн ĕçлесе ытлашши малалла кайма май килмен. Çапла вара Муркаш ялĕнчи хресченсем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче «Авангард» хуçалăх йĕркелеме йышăннă. Шаптак Муркаш ялĕнче «Знамя труда», Çĕньял Муркаш ялĕнче Сталин ячĕпе хисепленекен, Çурлатри ялĕнче «Парне» (пĕрремĕш ертӳçи И.Т. Тодинов) колхозсем йĕркеленнĕ.

Пĕрлешнĕ пулин те, ĕçлеме çăмăлах пулман. Пĕтĕм ĕçе алă вăйĕпе пурнăçлама тивнĕ. Техники çук, лашасем кăна.

«Парне» колхозра 1934 çулта лаша ферми йĕркеленĕ. Ăна ертсе пыма Ф. Маркова шаннă. 1935 çулта колхозниксем колхоз ятне улăштарнă, вăл С.М. Буденный ячĕпе хисепленме тытăннă. 1936 çулта осеменатор пулса Е. Пугачев ĕçленĕ. Вăрçă пуçлансан лашасене фронта чылай ăсатнă.

Вăрçă чарăнсан фронтран таврăннă салтаксем, «Авангард» колхоз ĕçченĕсем хальхи кирпĕч завочĕ патĕнче Муркаш ГЭС-не хута ячĕç. Муркаш ялĕнче электричество лампочкисем çутăлма пуçларĕç.

1947–1949 çулсенче Муркаш ялĕнчен уйрăлса вăрманта Малиновка ялĕ йĕркеленчĕ.



Кунти колхоза «Заря» тесе ят пачĕç, председатель пулма В. Федорова суйларĕç.

Çак çӳлте асăннă колхозсем Муркаш ял Советне кĕнĕ. Районта машинăпа трактор станцийĕ йĕркеленчĕ. Вăхăт малаллах каять. Пĕчĕк колхозсенче техникăпа ĕçлеме кансĕртерех, çитменнине вĕсен техникине туянма та майĕсем хĕсĕкрех. Çавна кура вак хуçалăхсене пĕрлештерес ыйту тухса тăрать. 1951 çулхи январĕн 29-мĕшĕнче пĕчĕк колхозсенче пухусем ирттереççĕ, колхозниксем пĕр пысăк хуçалăха пĕрлешессине ырлаççĕ.

Çав уйăхрах пĕрлехи пуху пулнă, ăна ертсе пыма Варпуç Чемейре çуралса ӳснĕ тата патшалăха тырă пуçтарса парассипе ĕçленĕ Е.А. Андреева суйланă. Унăн кандидатурине парти райкомĕ сĕннĕ пулнă. Унăн çумĕ пулма 1946–1951 çулсенче Буденный ячĕпе хисепленекен колхоза ертсе пынă Совет Союзĕн Геройне А.И. Воробьева суйланă.

Пысăк колхоз 5 ялтан тăрать ĕнтĕ. Колхоз правленийĕн ларăвĕнче колхозра 10 бригада йĕркелеме йышăнаççĕ. Ĕнесене Çурлатринчи, сыснасене Шаптакри, сурăхсене Çĕньял Муркашри, чăх-чĕпсемпе кăвакалсене Муркашри фермăсенче вырнаçтараççĕ.

Ыйтусем нумай пулнă. Ферма витисене çирĕплетес пулать. Çавна валли вара йывăç материалсем кирлĕ. Ăна илес тесе кашни çуркуннех 200 ытла колхозника Çармăс Республикине вăрман тăрăхĕсем лартма ăсатма тивнĕ. Йывăç калчисем лартнăшăн делянкăсем уйăрса панă. Колхоз хăйĕн вăйĕпех хĕлле вăрман касса çуркуннеччĕнех лашасемпе Атăл урлă Ильинкăна йывăç турттарнă. Çăва тухсан вара ăна хуçалăха машинăсемпе кӳрсе килнĕ.

Çапла майпа витесем çĕнелме пуçларĕç. Выльăх-чĕрлĕх валли апатне те ытларах хатĕрлеме тытăнчĕç. Кирлĕ пулсан улăмĕ те çынсем валли сутлăх тупăнма пуçларĕ. Выльăхсен йышĕ ӳссе пынă май тислĕк хатĕрлессипе те лару-тăру лайăхланчĕ. Çулла машинăсемпе, хĕлле лашасемпе турттарса пысăк тислĕк куписем тăватчĕç. Тислĕкпе анлăн усă курнипе çĕр пулăхлăхĕ те лайăхланчĕ, тыр-пул тухăçĕ те ӳсрĕ. Çĕр улмине гектар пуçне 300 центнер таран илме тытăнчĕç. 1960-мĕш çулсенче 10 бригадăран кашнинчех 25-шер гектар çĕр улми лартатчĕç.

Колхоз председателĕ Е.А. Андреев, хуçалăхăн тĕп агрономĕ Е.А. Ильина кашни кун уя халăх ĕçленĕ çĕре пырса çӳресе ĕçсене йĕркелесе пынă. Вĕсем мĕн хушнине бригадирсем пĕр пăркаланмасăр пурнăçланă.

Агрономăн хастар ĕçне палăртса Е.А. Ильинана 1967 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ», 1969 çулта «РФ тава тивĕçлĕ агрономĕ» ятсене пачĕç.

Çĕр улми туса илессипе ăнăçлă ĕçлесе пынă май пирĕн хуçалăх «Сортсемовощ» пĕрлешӳпе калаçса татăлса çĕр улми вăрлăхне Монголие ăсатма тытăнчĕ. Кашни çул çуркунне стандартлă çĕр улмине 4–5 вакун Шупашкартан ăсатнă. Кунпа пĕрлех пирĕн çĕр улми вăрлăхĕ аван пулнине курса Душанбе, Воронеж облаçĕсенчи хуçалăхсем те ăна вакунĕ вакунĕпе турттарса каятчĕç.

Çапла вара 1970-мĕш çулсене çитрĕмĕр. П. Оньков ертсе пыракан ĕне ферми сĕт сăвассипе, пăрусем илессипе районта малтисенчен пĕри пулнă. Фермăра питĕ тирпейлĕччĕ. Тислĕк купи çинче пĕр сарă улăм пĕрчи курăнман. Вăл хăех заведующи пулнă, фуражирĕччĕ те, осеменаторĕччĕ те, ĕçсене йĕркелесе пыраканĕччĕ те.

Çак пысăк çитĕнӳсене палăртса хуçалăхри чылай ĕçченсем çĕршывăн пысăк наградисене илме пултарчĕç. 1971 çулта ферма заведующине П.П. Онькова Ленин орденĕ, Е.Р. Орлова дояркăна Ленин орденĕ, 1973 çулта колхоз председательне Е.А. Андреева Социализмла Ĕç Геройĕн ятне, Н.Т. Тихонова бригадира Ленин орденĕ, тĕп агронома Е.А. Ильинана Ленин орденĕ панă.

**В. КРЮЧКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ферма заведующийĕ П.П. Оньков кунти ĕçченсемпе пĕрле.**